Шупашкар район хаçачĕ ❋ 1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

# ТĂВАН ЕН

47 (9340) № ❋ 2007 çулхи майăн (çу уйăхĕн) 3-мĕшĕ. Кĕçнерни кун ❋ Хакĕ ирĕклĕ

## *Анатолий КНЯЗЕВ:* СТРАТЕГИНЕ ТИВĔÇЛĔ ТӲПЕ ХЫВĂПĂР

***Вулакан пĕлет ĕнтĕ, Чăваш Республикинче малашлăхри ĕçсене палăртакан ятарлă пысăк план: «Чăваш Республикин 2020 çулчченхи аталану Стратегийĕ» саккун йышăнатпăр, хальлĕхе пĕтĕм халăхпа сӳтсе явасси пырать.***

Унта палăртнă тĕп шухăш экономикăпа çыхăннă, Чăваш Енри халăхăн пурнăç тата ĕç условийĕсене чăн-чăн тивĕçлĕ шая хăпартасси. Стратеги нумай енлĕ, ĕçлекен тата тивĕçлĕ канури уйрăм çынна та, пĕтĕм республика территорине те пырса тивет.

Шупашкар районĕ пур енĕпе те: çын йышĕпе те, экономика потенциалĕпе те, производство



***Вăрçă участникĕ Е.К.Гаврилова район пуçлăхне А.П.Князева хăйĕн çĕнĕ хваттерне хапăл туса кĕтсе илет.***

ӳсĕмĕ тĕлĕшпе те, миçе çул ĕнтĕ, республикăра малта пырать.

Паллах, çакă районти пĕтĕм шайри ертӳçĕсене те, халăха та малашне те хăйĕн ĕçĕшĕн, мухтаннинчен ытла, тата яваплăрах пулма, ăна тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама хистет.

Çак кунсенче район администрацийĕ Депутатсен пухăвне асăннă Стратегин пĕр пайне – Район стратегине – тăратрĕ. Ăна депутатсем пĕр саслăн пулса йышăнчĕç.

***Район стратегине район пуçлăхĕ Анатолий Пантелеймонович Князев акă мĕнле сăнласа пачĕ.***

– Тӳрех, пĕр пытармасăр каламалла, пирĕн район пек вăйлă тата хăвăрт аталанаканни çитес 3-4 çулта урăх курмастăп. Халь палăртнă производствăсене хута ярсан унăн промышленность тата ял хуçалăх производствин кăтартăвĕсем икĕ хутран кая мар ӳсмелле. Район территорийĕнче ***çурт-йĕр строительствин*** масштабне илер. Стратегире палăртнă Çĕнĕ хула çĕклени хăй çеç – питĕ пысăк проект. Унсăр пуçне районта урăх площадкăсем те пулĕç: Алькеш, Кӳкеç хăй т.ыт.те.

Нумай хутлă çуртсемпе пĕрлех сахал хутлисем те кăмпасем пек ӳсĕç, – ***терĕ Анатолий Пантелеймонович.*** – Халăх шучĕ çак 3-4 çулта икĕ хут хăпарĕ, 120-130 пин çынна çитĕ. Кăштах çăмăллăнтарах каласан, манăн халех «районăн пĕрпĕтĕмлĕхне (целостность) мĕнле сыхласа хăвармалла-ши?» текен ыйту çуралать. Чăнах, район влаçĕшĕн ку хăй пĕр шухăш пулĕ. Мĕншĕн тесен республикăра 16-18 пин çынлă районсем те пур чухне вĕсенчен 10 хута майлă пысăк района «пайламаллах» теме пултараççĕ...

***– Ку тĕлĕшпе çакăнтах ыйтас-шăн. Çĕнĕ хула проектĕнче вăл «уйрăм муниципалитет пулĕ» тени пур. Ăна халех палăртнă-и вара?***

– Ку хулара производствăсем пулмаççĕ. Ытларах пурăнмалли çурт-йĕр, социаллă инфраструктура пулать. Вăл уйрăм муниципалитет пулать е района кĕрет – кăна унта пурăнакансем татса парĕç. Унччен вара вăхăчĕ нумай-ха.

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра.)

❋ Депутатсен пухăвĕ

## *ХИСЕПЛĔ ГРАЖДАНИН ТА ПУЛĔ*

***Эрне кун Районти депутатсен пухăвĕн тăваттăмĕш созыври депутачĕсем черетсĕр ларăва пуçтарăнчĕç. Пăхса тухма палăртнă пилĕк ыйтуран тĕп вырăн йышăнни – Чăваш Енĕн 2020 çулчченхи социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕн Стратегийĕн проекчĕ.***

Ларăва район прокуратурин представителĕ, шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ тата ыттисем хутшăнчĕç. Республикăран сумлă представитель те пулчĕ. Вăл – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ ***М.А.Михайловский.***

Пĕрремĕш ыйтупа тĕп доклад тунă район пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ – экономика, пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен управленийĕн пуçлăхĕ А.Е.Егорова та, ун хыççăн тухса калаçнисем те Стратеги кирлине, вăл малашлăх плансене йĕркеллĕ палăртса ĕçлесе пыма май панине палăртрĕç. Ахальтен мар-тăр ЧР Патшалăх Канашĕ ку проекта пĕрремĕш вулаврa йышăнса ăна халăхпа сӳтсе явма кăларнă. Çапла тăваççĕ те. Çумдоклад тунă Тутаркасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.А.Елимов Стратегие хăйсем патĕнче сӳтсе явса ырланине пĕлтернĕ май, ял тăрăхĕн шайĕнче те кирлине палăртнине каларĕ. Районти депутатсен пухăвĕ Стратеги проектне ырларĕ.

Депутатсем бюджетпа çыхăннă икĕ ыйтăва пăхса тухса ырларĕç (кун пирки уйрăммăн пĕлтерĕпĕр), тепĕр иккĕшĕ – районта халиччен пулман çĕнĕ документсем. Район пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă юсав тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В.М.Сидоров каланă тăрăх, пĕтĕмĕшле усă курмалли çулсен классификацийĕ республикăра улшăннă хыççăн 260 километр ытла çула района панă. Çул хĕрринчи полосасене çирĕплетекен тата вĕсемпе усă курмалли ятарлă правило кирлине кура депутатсем хирĕçлемерĕç, йышăнчĕç.

«Шупашкар районĕн хисеплĕ гражданинĕ». Кун пекки те пулĕ районта. Ăна кама парассине, кандидатсене кам тăратма пултарассине тата ыттине палăртакан Положение те çирĕплетрĕ лару.

В.ЭВЕРККИ.

## *ВЕТЕРАНСЕНЕ ТЕ АВĂРТТАРМАЛЛА*

Курак Чурачăк тăрăхĕнче колхоз йĕркелениччченех Микул хуçан çил арманĕ пулнă. Вăл халăха пĕртте кӳрентермен, таврари ялсене пурне те авăрттарнă. Колхоз тусан çав арманта электромотор вырнаçтарчĕç те, ĕç пушшех лайăх кайрĕ: çынсене хуçалăхра вăй хунине-хуманнине пăхмасăр тивĕçтернĕ.

Темиçе çул каялла арман «Чурачикское» акционер обществине куçрĕ. АУО ăна лайăх ĕçлеттерет, общество выльăхĕ валли кунĕн-çĕрĕн авăртаççĕ. Анчах таврари ялсенче пурăнакансене çăнăх авăртса памаççĕ кунта. Тен, ферма валли авăртса ĕлкĕреймеççĕ. Тен, сăлтавĕ урăххинче те-и...

Ман шутпа, ял çыннисене арманта авăртса памаллах. Паллах, тӳлевлĕ. Кун пирки калаçу та çук. Ку ыйтăва çывăх вăхăтрах татса парасчĕ.

Н.СОРОКИН,
вырăнти ветерансен ертӳçи.

❋ Уй-хирте

## АКАКАНСЕМ – ТĂВАТĂ ХУÇАЛĂХ

Райадминистрацин ял хуçалăх пайĕн агрономĕ А.И.Смирнов пĕлтернĕ тăрăх, ĕнерхи кун тĕлне районĕпе 9220 гектар çинче нӳрĕк тытнă. Ленин ячĕллĕ, Куйбышев ячĕллĕ, «Прогресс», «Атлашевский», «Гвардеец» хуçалăхсем çуртрисем валли культиваци тăваççĕ.

Тăватă хуçалăхра акана тухнă. ***«Атлашевский»*** кооператив пуçланă рете ***Куйбышев ячĕллĕ, «Гвардеец», «Прогресс»*** предприятисем тăнă.

Районĕпе пурĕ 749 тонна минераллă удобрени туяннă, çав шутран 546 тонна – амселитра. Нумай çул ӳсекен курăксене 1713 гектар, кĕрхисене 715 гектар апатлантарнă. Вăрлăха 789 тонна им-çамланă.

В.ТИТОВА.

## ИКĔ ШКУЛА - МИЛЛИОН

«Вĕрентӳ» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн кăçал та шкулсене пĕр миллион тенкĕ пачĕç. Нумаях пулмасть списока камсем-камсем лекни паллă пулнă. Пирĕн республикăран 39 хула тата 87 ял шкулĕсем документсене хатĕрленĕ, вĕсенчен ***17-шĕ*** тата ***16-шĕ*** миллионшар тенкĕллĕ пулнă. Пирĕн районти икĕ шкул та унта лекнине палăртма кăмăллă. ***Тренккассисемпе Атайкассисен*** халь ку укçана мĕнле расхутламалли çинчен шухăшлама пуçламалла.

Вĕрентекенсем хушшинче те кам РФ Президенчĕн премине илме тивĕçлине палăртнă. Районти 21 кандидатран ***пиллĕкĕшĕн*** счечĕ çине Учитель кунĕ умĕн 100 пин тенкĕ куçĕ. Енчĕке хулăмлатакансем хушшинче виççĕшĕ чăваш чĕлхипе литературине вĕрентни те тĕлĕнтерет. Вĕсем – ***Кăшавăшри Евгений Александрович Майков, Тренккассинчи Ираида Аркадьевна Фомина, Тутаркассинчи Альбина Валентиновна Ишова.*** Çавăн пекех ***Тренккассинчи*** шкулта физкультура предметне вĕрентекен ***Михаил Юрьевич Яковлевпа*** Кӳкеçри ***лицейри*** математика предмечĕн вĕрентекенĕ ***Вера Васильевна Портнова*** та 100 пинлĕ пулнă.

А.СУСМЕТ.

## 45 ÇУЛ ВУТПА КĔРЕШЕÇÇĔ

***Апрелĕн 30-мĕшĕнче вут-çулăмпа кĕрешекенсем профессиллĕ уявне паллă турĕç.*** Малтан районта ăна пĕр организаци çеç уявлатчĕ пулсан, 2004 çултан çак кунпа Кӳкеçри ***41-мĕш пушар чаçĕн*** тата ***патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн*** ĕçченĕсене саламлаççĕ. Пушар чаçĕн кăçал тата тепĕр паллă дата – вăл 45 çул тултарчĕ. Çак ятпа пушара хирĕç кĕрешекенсене район пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ – экономикăпа пурлăх пайĕн начальникĕ А.Е.Егорова саламларĕ. Пушар чаçĕн профилактика енĕпе ĕçлекен инженерне Н.Н.Петрована район администрацийĕн Хисеп грамотине пачĕç. Кӳкеç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.В.Вершинин вут-çулăмпа кĕрешекенсене Тав хучĕ тыттарчĕ. Чăваш Республикин пушара хирĕç кĕрешекен службин те аякра тăрса юлмарĕ – юбилейпе саламласа компьютер парнелерĕ. Раççейри чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи тĕп управленийĕнчен профессиллĕ кунпа пушар надзорне автомашина та уйăрса пачĕç. Çакă ĕçе тата та çăмăллатĕ. Чи савăнăçли вара – пушар хуралĕн ĕçченĕсем шефа илнĕ шкул-интернат вĕренекенĕсем хăйсен наставникĕсене юрă-ташă парнелени пулчĕ.

А.АРДАЛИОНОВА.

## МАЙĂН 1-МĔШ УЯВĔ

***Майăн 1-мĕш уявне çĕнĕ сăн кĕрсе пырать.*** Халăх хăйĕн ирĕкĕпе çӳрет паян демонстрацисене. Çуркуннепе Ĕç уявĕ пулнăран, çак кун ытларах уйрăм çын шăпине, унăн ĕç-хĕлне мала лартаççĕ. Ытлари кун Шупашкарта иртнĕ демонстрацисене халăх шăпах çавнашкал лозунгсене йăтса тухнă: «Çынна тивĕçлĕ пурнăç!», «Тивĕçлĕ ĕç укçи!» т.ыт.т. Демонстрацие профсоюзсемпе пĕрлех партисем йĕркеленĕ. Чи пысăк колонна «Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») партин пулчĕ. Чапаев скверĕнче пуçланнă шестви Атăл хĕрринче чарăнчĕ. Каламалла, отрасльсен профсоюзĕсен колонннисенче те, парти колонннисенче те пирĕн район представителĕсем пулнă. Хĕрлĕ площадьре митинг пулчĕ.

Районта пысăк митинг планламан. Коммунистсен пысăках мар ушкăнĕ çеç Кӳкеçри Ленин палăкĕ умне пухăнчĕ.

В.ТРОФИМОВ.

### Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх

***Кĕçнерни кун, майăн 3-мĕшĕ***
улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк, юр е çумăр çăвать, кăнтăрла +10, çĕрле –3

***Эрне кун, майăн 4-мĕшĕ***
улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк, çумăр çăвать, кăнтăрла +10, çĕрле +3

***Шăмат кун, майăн 5-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, çумăр çăвать, кăнтăрла +7, çĕрле 0

***Вырсарни кун, майăн 6-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, юр е çумăр çăвать, кăнтăрла +3, çĕрле 0

# ПРИЗЫВНИКСЕМ ÇАРА КАЯÇÇĔ

***Апрелĕн 26-мĕшĕнче районта Призывниксен кунĕ иртрĕ. Апрель-июнь уйăхĕсенче Раççей çарĕн чаçĕсене службăра тăма пирĕн районти 62 çамрăк повестка илчĕ.***

Медкомисси Тăван Çĕршыва хÿтĕлеме юрăхлă тесе çирĕплетнине хумханса йышăнчĕç çамрăксем. Вĕсем хушшинче тинĕс çар флотне, тинĕс десант çарне, космос, сывлăш десант çарĕсене, Шалти ĕçсен министерствине, спецназ отрядне службăна каякансем пулаççĕ. Кăçалтан вăя кĕнĕ «Раççей Федерацийĕнчи çар тивĕçĕ тата çар службин çинчен» калакан саккунпа килĕшÿллĕн, «досрочный» меслетпе арçын тивĕçне пурнăçлас вăхăт 18 уйăхпа танлашать. Çавна май çар ретне тăракансене те хытă тĕрĕслеççĕ: чи малтан, паллах, сывлăх енчен çирĕп пулмалла, пĕлÿ шайĕ те пĕлтерĕшлĕ. Тата чи кирли – çарпа учет специальноçне илни. Кăçал кăна Шупашкарти РОСТО организацийĕнче пирĕн районăн 64 çамрăкĕ ятарлă пĕлÿ илнĕ.

Паян-ыран салтак тумне тăхăнакансене саламласа район пуçлăхĕ ***А.Князев,*** ветерансен канашĕн председателĕн çумĕ ***В.Михеенко,*** район военкомĕ ***М.Дунаев,*** военкоматри иккĕмĕш уйрăмăн ертÿçин аслă помощникĕ ***К.Егоров*** сăмах каларĕç. Кÿкеçри Державнăй чиркÿ пачăшки ***Николай атте*** пиллесе светтуй шывпа сирпĕтрĕ. Д.Мосъкинпа П.Николаев призывниксен Кÿкеçри лицей-шкулăн çамрăк армеецĕсемпе «Ирĕке каларакан салтак» палăк умне чечексем хучĕç.

Савăнăçлă лару-тăру хыççăнах призыв комиссийĕн анлă ларăвĕ иртрĕ. Чи хумхантаракан ыйту – çар службинчен таракансене явап тыттарасси. М.Дунаев военком каланă тăрăх, çурхи призывра 95 çамрăка çара ăсатмалла. Анчах вĕсенчен 49-шĕ призыв комиссине тĕрлĕ сăлтава пула медтĕрĕслев тухма килмен, хăшĕ-пĕрине пĕлтерейммен те. Кашни ял тăрăхĕ-пех цифрăсем илсе кăтартрĕ Михаил Юрьевич. Лару-тăрупа тĕплĕнрех паллашнă хыççăн район пуçлăхĕ А.Князев майăн 2-мĕшĕнче хăйĕн патĕнче иртекен анлă планерка валли ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене ку тĕлĕшпе доклад хатĕрлеме хушрĕ. Çар тивĕçне пурнăçлассинчен пăрăнакансене тата вĕсене пытарса пурăнакан ашшĕ-амăшне явап тыттарасси пирки асăрхаттарчĕ.




***Районти военкоматăн иккĕмĕш уйрăмăн ертÿçи В.Николаев призывника повестка парать.***

А.ИЗМАН.

# ПАСАРСЕНЧЕ ЙĔРКЕ ТУМАЛЛА

Апрелĕн 11-мĕшĕнче федерацин «Ваккăн сутă тумалли пасарсем тата Раççей Федерацийĕн Ĕçлев кодексне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунĕ вăя кĕнĕ.

Район çыннисем пасарсенче час-часах пулаççĕ. Тепĕр чухне çитменлĕхсем куçа тăрăнаççĕ. Калăпăр, пĕр çĕртех апат-çимĕç те, стройматериал та, ытти тавар та сутнине пурте курнă. Малашне çакна пĕтереççĕ. Мĕнле тавар сутма суйласа илнине кура çеç суту-илÿ тумалла. Пĕр вырăнтах тимĕр-тăмăр е апат-çимĕç сутма юрамасть.

Акă услам çу, тăпăрчă, хăйма сутакансем патне çывхаратпăр. Тарасисем кивĕ, тутăхнă, йĕпписем выляççĕ, 200-300 грамлăх çиччас улталаççĕ. Асăннă саккун паха, тĕрĕс ĕçлекен оборудованипе кăна сутă тума ирĕк парать. Тарасасене пасар администрацийĕн тĕрĕслесе тăмалла.

Сутма илсе пынă выльăха, аш-какая ветеринарипе санитари экспертизи витĕр кăлармалли çинчен çак саккуна йышăниччен те нумай каласнăха, тĕрĕслесен нумай ирттернĕ. Анчах хăш-пĕр пасарта çитменлĕхсем çав-çавах пур.

Халиччен пасар администрацийĕсем çÿлерех асăннă ыйтусемпе явап тытман пулсан, малашне вара явап тытмах тивет.

Ÿлĕм ял хуçалăх пасарĕсенче кăна автотранспортран суту-илÿ тума ирĕк пулать. Ваккăн суту-илÿ тăвакан пасарсенче çитменлĕхсене кăçалхи июнĕн 11-мĕшĕччен кая юлмасăр пĕтермелле. 60 кун хушшинче пасарсен вырăнти влаçран ваккăн суту-илÿ тума ирĕк илмелле.

Мĕнех, саккуна пурнăçа кĕртсен пирĕн пасарсенче йĕрке ытларах пуламалла.

Ю.МИХАЙЛОВ.

❋ Пурнăç

# ВĔСЕН ĂШĂ СĂМАХĔ ТЕ ПИРЕ ÇИТЕЛĔКЛĔ...

***Эпĕ, Надежда Антоновна Зарубина, 1922 çулта Красноармейски районĕнчи Çавал Çырма ялĕнче çуралса ÿснĕ. Хĕр пулса çитсен Шупашкар районĕнчи Энтимĕркассине качча килнĕ. Мăшăр вăхăтсăр çĕре кĕчĕ, ача-пăча пулман. Турри пÿрмен пулĕ...***

Ватлăха пĕччен иртерме йывăр пирки мана ***Кăшавăшри*** ваттисен çуртне вырнаçтарчĕç. Ялта та лайăхчĕ, вăй-хал çитмен пирки хам тĕллĕн нимех те ĕçлейми пулса çитрĕм. Тата пĕччен пурăнма хăрамалла пирĕн ялта. Пенси укçи ыйтма пыракансем те пулнă. Шутларăм та, такам мăшкăлĕ пулса вилес мар, ваттисен çуртне килес терĕм. Халь пурнăçĕ çавнашкал, çамрăксем иртĕхсе кайрĕç, вată-вĕтĕне пăхса тăмаççĕ, кÿрентереççĕ.

***Çакăнта*** куçнишĕн пĕрре те ÿкĕнместĕп. Килнĕ кунах ваттисен çурчĕн ертÿçи Л.И.Евдокимова тата Е.А.Максимова тухтăр çав тери ăшшăн кĕтсе илчĕç. Алăкран кĕрсенех кунта тирпейлĕх хуçаланнине асăрхарăм: пÿлĕмсем таса та çутă, хăтлă, йĕри-тавра чечексем ешереççĕ. Людмила Ивановна манпа, ют çынпа, питĕ кăмăллă калаçса пÿлĕмсене кăтартса çÿрерĕ. Кунтах медицина кабинечĕ те пур. Унта вăй хуракан Елизавета Антоновна юн пусăмне виçрĕ. Манăн вăл яланах пысăк пулнă. Тухтăр эмел те пачĕ.

***Пÿлĕме*** вырнаçтарсан кунти йĕркепе паллаштарчĕç. Эпĕ кун пек пурнăçа килте те курман: кашни пÿлĕмре кавир-палас, телевизор, холодильник, мĕнле кăна сĕтел-пукан çук пуль тата? Тĕлĕннипе хытса тăтăм. Виçĕ хутчен апатлантараççĕ, кашни кун тĕрлĕ çимĕç хатĕрлет С.Яландаева повар. Уявра, çуралнă кунра хуплу, шÿрпе пĕçерет, тĕрлĕ салат тăвать. Уяв ячĕпе пире парнесем те параççĕ. Пурте пĕрле çавра сĕтел тавра пуххăнса савăнатпăр. Людмила Ивановна алла купăс тытса юрлаттарать те, ташлаттарать те. Чиркÿ праçникĕсенче Валерий атте килет. Кĕлĕсем вулатпăр, çылăха каçарттарса сыпатпăр. Нумаях пулмасть Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Тихвинский мăнастире кайса килтĕмĕр. Çула май Шупашкарти Космонавтика музейне кĕрсе куртăмăр. Çул çÿрев пире питĕ килĕшрĕ. Л.И.Евдокимова – хăех экскурсовод та. Пирĕнпе яланах тухтăр та пĕрле. Юн пусăмне виçмелли хатĕрне, эмелĕсене те пĕрле илет.

***Ваттисен*** çуртĕнче пурăнаканĕсем йышлă пулин те, пире пăхакансен пурин валли те тимлĕхĕ çитет. Эпир те вĕсен ĕçне питĕ хисеплетпĕр. Кашни кун ирпе алăк умне тухса кĕтсе илетпĕр. Йăл кулли, ăшă сăмахĕ савăнтарать, пурăнма вăй-хал парать. Заведующи çитсенех пĕрремĕш: «Мĕнле çĕр каçрăр, чирлекен пулмарĕ-и?», – тесе ыйтать. Чăнах та, эпир халĕ çăтмахринчен те кая мар пурăнатпăр: А.И.Смирнова, О.М.Дмитриева, Л.Г.Гаврилова, Е.Г.Федорова йăлтах çуса-тасатса, хамăра та тирпейлесех тăраççĕ, апатне те пÿлĕмех килсе параççĕ. Кашни эрнере мунча хутса кĕртеççĕ. Мунчи пит техĕмлĕ. Çулла вăй çитнĕ таран пахча çимĕç çителĕклĕ туса илме тăрăшатпăр, ĕçлеме пултараканнисем ÿркенсе тăмаççĕ. Йĕри-тавра чечексем лартса тухатпăр. Пирĕн заведующи те вĕсене питĕ юратать, çавăнпа та кунта клумбăсем нумай.

***Май*** уйăхĕн вĕçĕнче, пахчара акса-лартса пĕтерсен, Л.И.Евдокимова пире канма, уçă сывлăшпа сывлама вăрмана илсе каять. Унта эпир чей куракĕ те пухатпăр. Майăн 25-мĕшĕнче Чулхула облаçĕнчи Дивеево мăнастирне кайма палăртрĕ Людмила Ивановна. Вăл каланă сăмахне яланах тытать.

***Кунта*** пурăнакансен нумайăшĕн ачи-пăчи пур, анчах вĕсем уявсенче те ашшĕ-амăшне килсе курмаççĕ. Эпир, ватăсем, нумай ыйтмастпăр, ăшă сăмах та çителĕклĕччĕ, пархатарсăр ачасенчен вăл та пулин çук. Эпир вĕсене ура çине тăратнă, çĕрнекунне, ывăннине пĕлмесĕр ĕçленĕ, чирлесе ÿксен алăра йăтса çĕр каçнă, яланах ырă суннă. Халĕ вĕсене кирлĕ мар пулса юлтăмăр. Çапах та пире ватлăхра пăхакансем тупăнчĕç. Кăшавăшри ваттисен çуртĕнчи кашни соцĕçчен хăйĕн ĕçне яваплăха туйса пурнăçлать, çĕре çити тайма пуç вĕсене уншăн.

Н.ЗАРУБИНА, ваттисен çуртĕнче пурăнакан.

## *Анатолий КНЯЗЕВ:*

# СТРАТЕГИНЕ ...

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.)

Çапах, район стратегийĕнче ку шухăш малта тăмасть. Унта чи малта производство, аталану, социаллă пурнăç, – ***терĕ малалла район пуçлăхĕ А.П.Князев.*** – Стратегире палăртнă тĕллевсене – район пуян пултăр, пĕр тикĕс аталантăр, çынсем ăнăçлă ĕçлесе хăтлă пурăнччăр – тенине пурнăçлас тесен промышленноçпа ял хуçалăхне çирĕп ура çине тăратмалла.

Акă районти 4 ***чăх-чĕп*** фабрикине илер. Республикăра пурĕ 12 вĕсем, анчах тăваттăшĕ уйрăмах лайăх ĕçлеççĕ. Малашлăхĕ те пĕчĕк мар вĕсен. Çăмарта шутне 3 хут, какай туса илессине те хăпартма палăртнă, укçа хывнă.

***Сысна ĕрчетесси.*** Кăçал кĕркунне Шĕнерпуç тăрăхĕнчи комплекса (малтанхи тапхăр – 12 пин пуç) хута яратпăр. Тепрер çултан унти йыша 24 пин пуça çитеретпĕр.

Çак уйăх вĕçĕнче «Искра» хуçалăх çĕрĕ çинче 30 пин пуç сысна тытмалăх тепĕр комплекс никĕсне хыватпăр. Тивĕçлĕ суммăлăх кредит хатĕр. Пĕчĕкрех йыш сысна ĕрчетекен хуçалăхсене те паян ку тĕлĕшпе çĕнĕ технологие алла илме сĕннĕ пулăттăм. Унсăрăн тупăш илеймĕç.

***Мăйракаллă шултра выльăх.*** Енчен те эпир тĕнчери суту-илÿ енĕпе ĕçлекен хăватлă «ВТО» организацие кĕрсе конкуренци капкăнне лексен, сĕт туса илесси пирĕншĕн çăлăнăç пулĕ. Мĕншĕн тесен ăна инçете илсе каяймастăн-килейместĕн. Çакна шута илчĕ те ĕнтĕ хăшĕ-пĕри. Калăпăр, «Ольдеевская» ЗАО çак кунсенче «ЧувашАгроМаркет» базине илчĕ. Вĕсем унта шăпах сĕт туса илес тĕлĕшпе малтанлăха 200-шер ĕне тытмалăх икĕ ферма, çав вăхăтрах кÿлĕсенче пулă ĕрчетме палăртаççĕ.

***Сĕт*** туса илессипе «Чурачикское» тата Ленин ячĕллĕ хуçалăхсем ятарлă залсем туса лайăх тĕслĕх кăтартрĕç. Юттисен те вĕсенчен вĕренмелле тесе шутлатăп. Малашне ку çулпах «Волга» («Атăл»), «Атлашевский» хуçалăхсем кайма палăртаççĕ.

Мăйракаллă шултра выльăх ***какай*** валли ÿстерессине, сурăх сутассине те манса хăвармастпăр. Ял хуçалăх ĕçне пĕтĕмлетсен çавна каламалла. Эпир паян кăларакан ку продукцин республикăри шайĕ 44 процентпа танлашать (çав шутра аш – 52%, çăмарта 80%). 4 çултан ку цифра 44 мар, 70 процент майлă пулĕ. Ку вăл Стратегие ăнăçлă тÿпе хывни тесе шутлатăп.

***Промышленноçа*** илсен те кăтартусем япăх пулмалла мар. «Ишлейри пысăк вольтлă аппаратурăсен завочĕ» ООО малтанхи пекех лайăх ĕçлемелле. Ун çумне пĕлтĕр Ишлей станцийĕнче йĕркеленнĕ «Шупашкарти электромеханика завочĕ» ЗАО хушăнчĕ. Районта паха кирпĕч кăларакан çĕнĕ технологиллĕ завод тума планланă. Вăл çулталăкне 120 млн. штук кирпĕч çапмалла.

Шел, тимĕр-бетон изделийĕсен завочĕ çук. Ун пирки шутлатпăр.

Унсăр пуçне, паллах, суту-илÿ базисем туса лартмалла. Килен-каян, Мускаври пекех, хулана кĕмесĕр мĕн кирлине айккинче туянма пултартăр. Хальлĕхе ун пеккине виçĕ çĕрте палăртнă.

Çывăх кунсенчех района «Тойота» компанин представителĕсем килмелле. Вĕсем автомобиль сервисĕ тата саппас пайсем сутмалли автоцентр валли вырăн шыраççĕ. Чăн та, республикăра пĕрре иномаркăсене юсамалли центр пулмаллах.

***Ишек пасарне*** те паянхи çирĕп требованисене тивĕçтерекен лайăх рынок туса ямаллах. Унăн историйĕ пысăк, малашлăхĕ хамăртан килет.

Енчен те палăртнă производствăсене хута ярсан, кунта çурт-йĕре те кĕртмелле, район бюджетне килекен налук бази темиçе хут ÿсĕ. Çапла, халăхăн социаллă пурнăçне тĕрев пама та нумай çăмăлрах пулать.

Туризм, спорт енĕсемпе те проектсем пысăк (шел, хаçат калăпăшне кура эпир пурне те кĕртейместпĕр – ***авт.***). Çăлсене илемлетессине хам çине илетĕп, тĕрĕс ăнланăр – район бюджечĕ çине мар. Айккинчи çăл куçсемпе усă курса та пулин, вĕсене тирпейлемелле тесе шутлатăп.

***– Тирпей-илем тенĕрен, Шурă Шупашкарăмăр, республикăн тĕп хули хăйĕн каяшĕсене хума ниçта вырăн тупаймасть. Тутаркасси ял тăрăхне ăçтан кăна килмерĕç пуль. Сире хăвăра та «çÿлтен», каçарăр та, аванах «пĕçерккĕ» лекрĕ пуль-ха. Халь кун пирки мĕн калана пулăттăр?***

– Паллах, никамăн та хăйĕн тирпейлесе тасатнă ялĕ çывăхне каяш авăртакан е преслакан завод тутарас килмест. Çитменнине, Тури Макаç пĕлтĕр «Илемлĕ ял» номинацире, республикăри конкурсра, мала тухрĕ... Хамăр енчен сĕнÿсем панă: сăмахран, Атăл леш енчи вăрманта тума пулать. Тутаркасси тăрăхĕнче ку ыйтупа, саккун ыйтнă пек, халь референдум йĕркелеççĕ. Ун кăтартăвне те шута илмелле пулĕ. Ку тĕлĕшпе эпĕ урăх нимех те калаймастăп.

***– Çапах, эпĕ ăнланнă тăрăх, республикăра йышăнакан çак Стратегие пирĕн район чăннипех лайăх тÿпе хывма палăртать. Пархатарлă тĕллевсене ăнăçлă пурнăçлама çирĕп вăй-хал сунатăп.***

В.СОРОКИН калаçнă.

✵ Мунча

# КАПИТАЛЛĂ ЮСАВ

### ÇĔНĔ ÇУЛ ПУÇЛАМĂШĔНЧЕНЕХ

Кÿкеçре, автобуссен юлашки чарăнăвĕнчен инçех мар, мунча пур. 4-5 çул каялла ăна вăхăтлăха хупса пĕчĕк юсав ĕçĕсем irтернĕччĕ. Ун хыççăн чăрмав пулманччĕ-ха – çынсем хăнăхнă йăлапах унталла утатчĕç. Анчах Сысна çулĕ чăннипех сысналла хăтланчĕ темелле пуль. Январь уйăхĕнчен варах кунта мунча шăрши тухма пăрахнă. Пĕтĕмĕшле юсав ĕçĕсем ирттереççĕ иккен. Тăватă уйăх майлă ĕнтĕ Кÿкеçре пурăнакан мунча кăмăллакансем кам Лапсара, кам Шупашкара çÿреççĕ.

### КИЛЕНŸ ХАКА ЛАРАТЬ

Хулари мунчасенче пĕр çын пуçне 70 тенкĕрен пуçласа 90 тенкĕ (мунчи хулан хăш районĕнче вырнаçнинчен килет пулмалла) таран тÿлемелле (çул укçине шутламасăр). Уйрăм сауна илес пулсан 4 е 6 вырăнлине тата бассейн пуррипе çуккине кура 375 тенкĕрен пуçласа 800 тенкĕ таран енчĕке пушатмалла. Милĕксĕр те май килмест. Ăш хыпнинчен ĕçме шыв та илмелле.

### ХУПАСШĂН МАР

Кÿкеçри мунча пирки вара темле сас-хура та çÿрет. Çын сăмаххи тăрăх вăл март уйăхĕнчех хута каймаллаччĕ, анчах... Теприсем ăна вуçех те хупаççĕ теççĕ. Халăхра тĕрĕс мар сăмах çÿреме пăрахтăр тесех мунча хуçипе, Н.В.Губинапа, çыхăнтăмăр. Акă мĕн каласа пачĕ вăл: «Паян мунчара капиталлă юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Малтан кĕске вăхăта çеç хупăнăпăр тенĕччĕ, анчах тахçантанпах тĕплĕ юсав ирттерменни курăнчĕ», – терĕ Наталия Вячеславовна. Чăнахах, кунта пысăк улшăнусем курăнаççĕ. Салтăнмалли пÿлĕме те, çăвăнмаллине те паянхи пурнăç ыйтнă пек тăвасшăн. Çивитти юхма пуçланă, çавăнпа ку чăрмава пĕтерессипе, вентиляцие йĕркене кĕртессипе ĕçлеççĕ. Малтан пурĕ 5 сауна пулнă пулсан, халĕ виççĕ хăварасшăн: иккĕшĕ вăтам класли, пĕри VIP-сауна пулĕ. Пăрăхсемпе котельнăйне пĕтĕмĕшле улăштарнă. Мĕншĕн тесен тăкакĕ пысăк пулнă, мунчи вара, ытлах вĕри те пулман. Çавăнпах халĕ çĕнĕ хуçасем энергие перекетлекен оборудовани, котельнăй лартнă. Мунча кĕме килекенсем тренажер залĕнче те хатĕрленме пултараççĕ. Уншăн укçа тÿлемелле пулмĕ, вăл билет хакне кĕрет. Ăна вара 80-85 тенкĕ тума палăртаççĕ. Çавăн пекех ку çуртрах стоматологи кабинечĕ, çĕвĕ цехĕ, кафе-бар ĕçлет. Хупăнасшăн мар мунча, тепĕр майлă, çĕнĕлле, çĕнĕ уйрăмсемпе, çĕнĕ хакпа ĕçлеме хатĕрленет.




*Мунчари лару-тăрупа районти хĕрарăмсен канашĕн членĕсем те паллашрĕç.*

А.СУСМЕТ.

# НЕСĔЛĔМĔР КАМРАН ПУÇЛАНСА КАЙНĂ-ШИ?

***Йывăç хăйĕн тымарĕпе çирĕп – çын хăйĕн несĕлĕпе пуян. Анчах та хамăр тăвансене пурне те пĕлетпĕр-иха эпир? Ĕлĕк чăвашсем хăйсен йăхне çичĕ сыпăк таран пĕлсе тăнă. Манăн та анне енчен йăх тымарĕсене тĕпчесе пĕлес шухăш çуралчĕ. Тăвансенчен чи ватă çынсемпе калаçнă хыççăн нумай интересли пĕлтĕм.***

Манăн несĕлсем Павел Павловран тата унăн аслă ывăлĕнчен Захар Павлович Павловран пуçланса кайнă. Захарăн çемйи пысăк пулнă. Вăл Мария арăмĕпе сакăр ача ура çине тăратнă: Мария, Василий, Екатерина, Николай, Анна, Григорий, Андрей, Анастасия. Павăлăн вăтам ывăлĕ Николай пулнă. Вăл ман ват кукаçи, çамрăклах вăрçа тухса кайнă. Ржев хулинче фашистсемпе çапăçнă чух снаряд урине амантнă. Суран вăйлă пулнăран гангрена чирне кайнă, çавăнпа хăрах урине тăватă хут татма тивнĕ. Николайпа Нина арăмĕ сакăр ача пăхса ÿстереççĕ: Роза, Люба, Петя, Таня, Зина, Валентин, Тамара. Кашниех пĕлÿ илсе çĕршыва усăллă çын пулса тăрать. Вĕсем хушшинче – Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ – Зинаида Николаевна Петрова, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ Любовь Николаевна Ашряпрянова. Пирĕн тăвансем хушшинче вунă учитель, пурте вĕсем тĕрлĕ шкулта вăй хураççĕ.

Уйрăмах хамăн кукаç çинчен çырса кăтартас килет. Вăл – Петр Николаевич Николаев. Кукаçи ĕçчен, ырă кăмăллă çын. Вун икĕ çул ытла Çĕньял шкулĕнче директор пулса ĕçлерĕ. Халĕ Шупашкарти техникумра преподавательте вăй хурать. Вăл Чăваш Республикин спорт мастерĕн кандидачĕ. Ман анне те, Алина Петровна Григорьева, шкулта учитель пулса ĕçлет. Эпĕ вара портфель йăтса кашни кун шкулалла чупатăп.

Алена ГРИГОРЬЕВА,
Апаш шкулĕ.

✵ Тăван тавралăх тирпей-илемĕ

# ИЛПЕШ СВАЛКИ МАР–ÇКЕ ВĂЛ. ВĂРМАН...

«Кÿкеç вăрманне кайса пăхăр-ха. Ÿкерсе килĕр пĕрех хут», – ÿкĕтлесех ыйтрĕ редакцие кĕнĕ пĕр çын. Мĕн каласси: вăл вăрманпа хам та ирсерен ĕçе утатăп, ăçта кирлĕ унта çÿп-çап йăваланнине куратăп. Ытла та йĕрĕнмелли вырăнсенчен пуçа айккинелле пăрса иртетĕп.

«Илпеш свалки мар вĕт вăл», – район центрĕнчи вăрман пирки чунтан пăшăрханса калаçать ырă çыннăмăр. Чăн та, çÿп-çап тăкмалли вырăн тейĕн. Йăла юлашкине çÿп-çап контейнерне кайса ывăтма ÿркенекенсенчен хăшĕсем питĕ «ăслă»: чÿречерен урамалла переççĕ. Кăшт вăрвартараххисем ĕçе кайнă чух çула май йăтса тухаççĕ те вăрманта ывăтса хăвараççĕ...

❂ ❂ ❂

Халĕ тата «шашлăк тапхăрĕ» пуçланчĕ. Тĕтĕм çинче пĕçернĕ какая кăмăллакансем вăрмантах кăвайт чĕртеççĕ. Шучĕпе вара усă вырăнта апла хăтланма юрамасть. Йĕркесĕрлĕхшĕн чунĕ ыратакансем асăрхаттараççĕ, пĕри милицине те шăнкăравласа пĕлтерет. Лесник та курсанччĕ çавăн пеккисене! Тен, кам пĕлет, вăл та урараn ÿксех каллĕ-маллĕ хутлать ку вăрманпа. Анчах кăвайт чĕртнĕ вырăнсем унта та кунта курăнаççĕ. Ун пек хăтланнăшăн ним мар штраф хума пулать, виçи пĕчĕк мар: пин тенкĕрен пуçласа малалла.

Лесник тенĕрен, хăйсене чăн-чăн вăрман хуралçи пек туякансем пĕтмен-ха. Акă, сăмахран, Платкасем каланă тăрăх, вăрманта кăвайт чĕртме тăратăн-и, е милĕк валли хурăн туратти иртетĕн-и – вырăнти вăрманçă, Михаил Мешков, часах персе çитет, вăрман пирĕн пуянлăх иккенне, ăна упрамаллине аса илтерет. Ытларахчĕ ун пеккисем!

❂ ❂ ❂

Йывăç-тĕм лартса хăвармалли вăхăт пырать халь шăпах. Ман шутпа, лартни пĕрре, анчах упрани – тепре. Аякка кайма кирлĕ мар, район центрнех илме пулать. Советски урамра лартаççĕ, анчах, те качака кăшласа пĕтерет ăна, те вăйне ниçта хума пĕлмен çамрăксем тăпăлтараççĕ. Курнисем: сăлтавĕ вăл та, ку та теççĕ...

❂ ❂ ❂

Тирпей-илем хамăртан килет. Çавна çÿп-çап пăрахманнинчен тытăнмалла. Субботник таврашне шкул ачисене явăçтаратпăр. Анчах пĕр ыйту явăнать: мĕнле шухăш-кăмăлпа ÿсеççĕ-ши вĕсем? Çын хыççăн пуçтарма тивнине кура ун пек пеме юрамасть теççĕ-ши е урăхла шутлаççĕ-ши?

Кирек епле пулсан та, вĕрентÿ учрежденийĕсем тăн парасса çеç шанмалла мар, пирĕн, ашшĕ-амăшĕн, хамăр тĕслĕхпе çирĕплетесчĕ.

❂ ❂ ❂

Тĕслĕхне вара кăтартма васкамастпăр çав. Пĕр пĕлĕш каласа пани аса килет: «Хĕл каçипе урама пĕр ним персе хăварман эп, пĕрех хамăр пурăнакан нумай хутлă çурт картишне пуçтарма мăшăрăмпа тухрăм. Пирĕнпе теприсем, арăмĕпе упăшки, килĕшрĕç. Хамăр çуртра пурăнакан пĕр хĕрарăма: «Санăн йытту вĕçĕм варалать. Эпир ун каяшне те пуçтаратпăр», – чĕнетĕп хамăрпа ĕçлеме. Хайхи ман çине кÿренсе лартрĕ. Çавăнтанпа сывлăх та сунми пулчĕ». Вăт сана!

❂ ❂ ❂

Пĕрех пĕр-пĕрне асăрхаттарасчĕ, хамăра тĕрĕс асăрхаттарнишĕн кÿренес марччĕ. Пĕри ан чĕн, тепри ан шарла... Ик айкки те тăвайкки тени ура хурать те чылай чух. Чи кирли – ачамăрсене те тирпейлĕхе вĕрентесчĕ.

В.ЭВЕРККИ.

# ХАЧĂКРИ ХУÇАСĂР ХУРАÇКАСЕНЧЕН ХĂТĂЛМАЛЛАХ

***Этем çывăхĕнче чĕр чунсенчен малтан йытă пулнă. Ахальтен мар пулĕ хисеплесе ăна «тăватă ураллă тус» тетпĕр. Йыттăн, эппин, çынна çеç мар, килĕнчи выльăх-чĕрлĕхе те, кайăк-кĕшĕке те хÿтĕлемелле. Анчах ăна «кукăр хÿреллĕ» тесе каланине те манма юрамасть.***

### ЙЫТĂ – ТУС-И?

Çын тусĕ тенĕрен хам кĕçĕн класра вĕреннĕ чухне «Тăван сăмах» кĕнекери пĕр калав аса килет. Унта пĕр йытă вăрçă хирĕнче аманнă совет салтакне шыраса тупни çинчен çырса кăтартнăччĕ. Калава ÿкерчĕкпе илемлетнĕ: юрлă хирте выртакан салтакпа юнашар тăватă ураллă тус тăрать: санитари йытти. Тĕслĕхсем пур ĕнтĕ. Авă, Белкăпа Стрелка тĕнче уçлăхнех тухрĕç...

Анчах йытă йышĕнче çынна сусăрлатакансем те тупăнаççĕ.

Свердловск облаçĕнчи Тавда хулинче пулса иртнĕ тĕслĕх çинче чарăнса тăрасшăн.

Çуллахи пĕр тĕттĕм каç асăннă хулан аслă урамĕпе пыратăп. Кунта кашни килте тенĕ пекех, юнашар колони-поселени вырнаçнăран пулĕ, йытă тытаççĕ. Тăрук пĕр килтен хамлатса кушакран кăшт пысăкрах йытă тухрĕ те мана ураран кап! турĕ. Часах йытта кил хуçи каялла чĕнсе илчĕ. Каярахпа хамăн шăлавар çĕтĕлнине, «Кампур тус» урана суранлатнине асăрхарăм...

### ЯЛ ТĂРĂХĔ ПУЛĂШАТЬ

Халĕ Хачăкри йытăсем пирки. Вĕсене пирĕн ялта пĕр вунă кил хуçинчен ытла тытмаççĕ. Чылайăшĕ килте сăнчăртах тăратать. Хăш-пĕр хуçа кил сыхлавçисене урама уçăлса çÿреме шиксĕрех кăларса ярать. Вĕсем вара тилĕ пек пулса чăхсене хăвалама пикенеççĕ.

Апрелĕн малтанхи кунĕнче çăмламассенчен пĕри Серафима Мочалова пенсионеркăн чăххисене хăваланă. Тăваттăшĕ хăтăлнă, пĕри вара тăватă ура капкăнне лекнĕ-лекнех.

Чăх-чĕпе çеç-и, иртнĕ çулла чарусăр, хуçасăр йытăсем сурăхсене тустарни те пулнă.

Çакăн çинчен вара нумаях пулмасть Хачăкра Ишлей ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Я.В.Кушев ертсе пынă пухура калаçмасăр чун чăтмарĕ.

«Хуçасăр йытăсем ытти ялсенче те канăç паман. Вĕсенчен чылайăшĕнчен хăтăлнă та ĕнтĕ, – терĕ Яков Васильевич. – Черетре Хачăкри хуçасăр «Кампурсемпе Хураçкасем». Çапла вара шантарчĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.

А.МОКИН.

# БИБЛИОТЕКĂРА

Галина Николаевна Чаликова Хыркассинчи библиотекăра нумай çул ĕçлет. Ваттисене те, çамрăксене те кĕнекесемпе тивĕçтерме тăрăшать. Çитмĕл çултан иртнĕ Ю.Н.Максимовпа К.В. Иванова – пурĕ çĕр ытла вулакан кунта хапăл тусах çÿреççĕ. Библиотека наркомание, алкоголизма, шкул ачисем пирус туртассине хирĕçле акцисене хутшăнать. Галина Николаевна – ветерансен организацийĕн ертÿçи, «Тăван Ен» хаçата çырăнтарас енĕпе те вăй хурать.

С.СЕРЕГИН.

✵ Хаçатра çырнă хыççăн

***Эпĕ*** хаçатăн мартăн 31-мĕшĕнчи номерĕнче тухнă ***«Тренккасси каччине»*** уçă çырупа паллашрăм.

Оксана, эсĕ лекнĕ лару-тăрăва эпĕ те лекме пултарнă. Шел те, сан юратăву чăн юрату мар. Эсĕ ăна хăвна нушалантарма шухăшласа тупнă. Сирĕн пĕр çемьене пĕрлешме май килмен. Апла пулсан Турă çапла çырса хунă.

Манăн чи çывăх тантăш пĕр каччăна юратса пăрахрĕ. Анчах каччи ун çине çаврăнса та пăхмарĕ. Хĕр хăйĕн пурнăçне татма та хатĕрччĕ. Ăна вăхăтра пулăшрăмăр. Вара хăйне алла илчĕ, каччă çинчен шухăшлама пăрахрĕ. Кайран хăйне юратакан каччă тупрĕ. Вĕсем пĕр-пĕрне саваççĕ. Оксана, Тренккасси каччине манма санăн та вăй çитĕ. Куçран пăхса: «Эпĕ сана юрататăп», – тесе калакан каччă саншăн пур пĕрех тупăнать.

Н.ЛЬВОВА.

❂ ❂ ❂

***«Тренккасси каччине»*** ятлă уçă çырупа эпир те, Хыркассинчи ваттисен çуртĕнче пурăнакансем, интересленсех паллашрăмăр. Çыру авторне, Оксанăна, çавăн пек сĕнÿ паратпăр. Каччăсем хĕрсене пăрахни ĕлĕк те пулнă, халĕ те пулать. Çавăнпа, Оксана, куншăн питех ан кулян. Эс çамрăк-ха, çĕнĕ каччă тупăн. Сур ун çине, текех ан шутла. Ăнăçу сунатпăр.

О.ГАВРИЛОВА.

# В РАЙОНЕ, 9-ого МАЯ

| Клубные учреждения | Мероприятия |
|---|---|
| Абашевский клуб-музей | Торжественный праздник «Нам дороги эти позабыть нельзя» |
| Хыркасинский ЦСДК | Торжественный митинг «Вĕсем вилсен те парăнман» |
| Туруновский СДК | Праздничный концерт «Поклонимся Великим тем годам» |
| Б.-Мамышский с/клуб | Вечер отдыха «День Победы» |
| Янашкасинский с/клуб | Митинг «День Победы» |
| Янышский ЦСДК | Митинг, посвященный Дню Победы «У войны не женское лицо» |
| Чемуршинский ДТ | Праздничный концерт «Кăвак çÿçлĕ ветерансем» |
| Яндовский с/клуб | Митинг «День Победы – как он был от нас далек» |
| Хачикский с/клуб | Тематический вечер «Как он был от нас далек» |
| Чигирьский с/клуб | Праздничный концерт «Этот день мы приближали как могли» |
| | Театрализованно-концертная программа «Никто не забыт, ничто не забыто» |
| Кодеркасинский ДФ | Торжественный митинг «Помните…» |
| Ырашпулыхский с/клуб | Праздничный концерт «Они сражались за наше будущее» |
| Сятра-Маргинский с/клуб | Торжественный концерт «Эхо прошедшей войны» |
| Ишлейский ДТ | Вечер-встреча с ветеранами «От всей души…» |
| Корак-Чурачикский СДК | Вечер-встреча с ветеранами ВОВ «Поклонимся великим тем годам» |
| Большекатрасьский ЦСДК | Торжественный праздник «Пока нас помнят, мы живы…» |
| А-Кинярский СДК | Торжественный праздник «Дороги судьбы – дорога Победы» |
| Аначкасинский с/клуб | Праздничный концерт «Спасибо за Победу» |
| Шоркинский ДФ | Праздничный концерт «Аса илсем, салтак» |
| Клычевский с/клуб | Вечер – встреча с ветеранами и солдатскими вдовами |
| Вурманкасинский Дом фольклора | Митинг, посвященный Дню Победы в ВОВ «Песни, рожденные войной» |
| Синъял-Ойкасинский с/клуб | Митинг «Никто не забыт, ничто не забыто» |
| Сарабакасинский ЦСДК | Митинг, праздничный концерт «День Победы» |
| Тохмеевский с/клуб | Митинг у памятника в честь Дня Победы «Мухтав сире, кăвак çÿçлĕ ветерансем» |
| Малокарачуринский с/клуб | Литературно-музыкальная композиция «Минувших лет святая память» |
| Чиршкасинский ДТ | Праздничный концерт «Где же вы теперь, друзья-однополчане» |
| Ядринкасинский СК | Концерт «День Победы» |
| Синьяльский ДТ | Чествование ветеранов ВОВ «Нам дороги эти позабыть нельзя» |
| Чиршкасинский ЦСДК | Литературно-музыкальная композиция «Салют Победы» |
| Ишакский КОЦ | Чествование ветеранов ВОВ и тружеников тыла «Шурă çÿçлĕ салтак-ветеран» |
| РДК | Торжественный митинг, театрализованное представление «День Победы» |

# «ЧИ ТАСА МАР ЯЛ» КОНКУРС КАНДИДАЧĔ

**(Малалли. Пуçламăшĕ 44-мĕш номерте.)**

***Район центрĕнчи*** халăхра «Сельхозтехника» текен вырăна санэпидемстанци (малтанхилле каласан) енчен каçса кайнă çĕрте çулăн ик енĕпе те питĕ-питĕ таса мар. «Сельхозтехника» районĕ патĕнчи çырма хĕррине, темиçе вырăна, свалкăна куçарнă. Аялта – кÿлĕ. Тасамарлăх йышăнса вăл «халтан» кайнă-тăр: ăшăхланса юлнă, шывĕ симĕсленсе ларнă.

«П» саспалли евĕр вырнаçнă Геологически, Шоссейнăй, Кутузов урамĕсене кĕрекен çуртсем. Унта йăлари таса мар шыва тăкмалли ятарлă вырăн пур. Темшĕн-çке çынсем шывне кăна мар, йăла юлашкине те унта пырса сиплеççĕ.



***«Сельхозтехника» районĕ енчен санэпидемстанци еннелле каçмалли тăрăхра йăла юлашки те, бетон плита та вырăн тупнă.***

«Çав тăрăхри пĕр çуртра пурăнакан ÿркенмен пĕр кинемей темиçе çул каялла тасатса тăратчĕ, те вилнĕ вăл халь...» – терĕ çав енче пурăнакан пĕр хĕрарăм.

Мĕнех пĕтĕмлетейĕн: çакăн пек сăн-сăпатпа куç умне тухса тăнă район центрĕ пирĕн конкурсра çĕнтересси пирки те шанма пулать...

В.ЭВЕРККИ.

# ÇЫН ВĔЛЕРЕКЕНЕ АЙĂПЛАНĂ

Апрелĕн 18-мĕшĕнче райсуд Çатра Хочехматри В.А.Зосимова (1954 çулхи) ветеринара вĕлернĕ Ю.А.Арсентьева (1978 çулхи) 11 çуллăха ирĕклĕх прависĕр хăварма, çирĕп режимлă колонире тытса усрама йышăнчĕ. Арсентьев 2003 çулта милицире ĕçленĕ. Патруль ушкăнĕн милиционерĕ пулнă чухне киревсĕр ĕç тунă. Ăна шалти ĕçсен пайĕнчен кăларса янă. Саккуна тепре пăссан уголовнăй йĕркепех айăплама пултарнине лайăх пĕлнĕ вăл. Анчах каллех преступлени тунă.

21.12.2006 ç. Арсентьев, эрех ĕçсе хĕрнĕскер, Зосимова килне кĕрет. Хĕрарăм ăна ырă сунсах кĕтсе илнĕ, çуттине ĕçтернĕ. 28 çулти арçын, икĕ ача ашшĕ, кил хуçине хĕнеме пуçланă, шăмми-шаккине хуçса пĕтернĕ. Йывăр суранĕсене пула Зосимова килĕнчех вилнĕ.

Эпĕ судра патшалăх енчен айăплаканĕ пултăм, Арсентьев питĕ йывăр преступлени тунине шута илсе, ăна 14 çула тĕрмене хупма ыйтрăм. Анчах С.В.Иванов, И.В.Петров тата В.Г.Бойправ судьясем Арсентьев преступлени тунă хыççăнах айăпне йышăнма Кÿкеçе чупса килнине тĕпе хурса ăна 11 çул çеç пачĕç. Ман шутпа, ку ытла та çăмăл айăплав. Çын вĕлерекенсене хĕрхенме кирлĕ мар тесе шутлатăп.

А.ИВАНОВ,
район прокурорĕн çумĕ.

# 100 ПИН ЙЫВĂÇ

Шăпах çавăн чухлĕ йывăç кăçалтан çĕнĕрен кашлама пуçлĕ районта. Йывăç хунавне «ЧувашАгроМаркет» компание кайса илмелле. Хăш-пĕр ял тăрăхĕ илсе кайса лартма ĕлкĕрнĕ. Ыттисен те васкасчĕ. Хунава (виçĕ тĕрлĕ йывăç унта: хырпа чăрăш тата хурăн) тÿлевсĕр параççĕ.

Йывăç кунĕнчен райадминистраци те юлмĕ. Унта ĕçлекенсем Апаш тăрăхĕнче паян 2 пин хурăн лартаççĕ.

В.ТИТОВА.

✵ **Культура хыпарĕ**

# ХАЛĂХ ТЕАТРĔСЕН ТУСЛĂХĔ ÇИРĔПЛЕНЕТ

Халăхăн пушă вăхăтне усăллă иртересишĕн тăрăшакан Апашри клуб-музейшăн апрель уйăхĕ культура мероприятийĕсем тĕлĕшĕнчен уйрăмах пуян пулчĕ. Мăнкун ячĕпе кунта Çĕрпÿ халăх театрĕ Н.Сидоровăн «Кукша пуçа куршанак çыпăçмасть» пьеса лартса панă. Куракансене М.Степанова (Кĕтерук) тата харăсах виçĕ роль выляса панă К.Константинов артистсем уйрăмах килĕшнĕ. Апашсемпе Çĕрпÿсем пĕрремĕш çул кăна мар ĕнтĕ пĕрпĕринпе хутшăнаççĕ. Юлашки тĕл пулура вĕсем икĕ театрăн художникĕн, Апашра пурăнакан В.Борисовăн, 60 çулхи юбилейĕ ячĕпе кĕркунне мероприяти иртерме калаçса татăлнă.

Апрелĕн 20-мĕшĕнче Апашсем халăх театрĕ ята хÿтĕленĕ. 23-мĕшĕнче унтах культĕçченсен республикăри конференцийĕ иртнĕ.

А.ИЗМАН


## ОБЬЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРÿСЕМ

☎ *2-13-80*

**Организация** *примет* на работу электромонтеров-линейщиков. Оплата достойная. ***Тел.: 2-15-36.***

**Участники** долевой собственности Иванова Р.М., Иванова Н.Н., Кондратьев А.Ю. сообщают о своем намерении выделить по 0,15 га пашни каждый в поле №3 первого полевого севооборота, расположенного за д.М.Янгильдино для ведения личного подсобного хозяйства за счет земельных долей из земель СХПК «Сад» Чебоксарского района ЧР. Возражения просим направить по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственник** земельной доли Иванов Виталий Павлович сообщает о намерении выделиться из землепользования СХПК-колхоза им.Куйбышева Чебоксарского района ЧР в счет земельной доли в поле №3 кормового севооборота общей площадью 3,26 га, расположенного южнее д.Б.Янгильдино. Возражения направить по адресу в течение месяца: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственники** земельных долей Захаров Л.М. и Захарова А.Г. сообщают о своем намерении выделиться в счет земельных долей из земель СХПК им.И.Г.Кадыкова Чебоксарского района ЧР по 2,15 га пашни на каждого в поле №1 кормового севооборота, участок №1, расположенного северо-восточнее д.Ильбеши Чебоксарского района рядом с КФХ «Колос». Земельный участок ранее предоставлен согласно постановлению главы администрации района для ведения фермерского хозяйства.

Свои возражения направить в течение месяца в администрацию Чебоксарского района по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,062 га, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д. Большие Катраси, ул. Клиновая (земли населенных пунктов), сроком на 11 месяцев для огородничества.

Адрес: ***пос. Кугеси, ул. Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

***Продается корова, рыже-пестрая, 4 отела. Обращаться: д.Кивсерткасы, ул.60 лет Октября, д.19. Тел.: 2-14-85.***


**Поправка.** В газете «Тăван Ен» №№ 133-134 от 19.11.2005 г. в объявлении о выделении земельных долей Ивановой Р.М., Ивановой Н.Н. вместо «по 2,03 га» следует читать «по 1,88 га пашни в поле №3 около д.М.Янгильдино» и в газете «Тăван Ен» № 143 от 13.12.2006 г. в поправке о выделении земельной доли Кондратьеву А.Ю. вместо «10150 кв.м» следует читать «0,865 га пашни в поле №3 около д.М.Янгильдино».

**Поправка.** В газете «Тăван Ен» №№ 27-28 от 17.03.07 г. в объявлении Капитонова А.П. и Иванова В.Р. о выделении земельной доли вместо «рабочий участок 1 площадью 9,86 га» следует читать «рабочий участок №1 площадью 11,76 га» и в №№ 5-6 от 20.01.2007 г. в объявлении Иванова В.Р., Капитонова А.П., Хорасева Э.В. о выделении земельной доли вместо слова «Всеволдович» следует читать «Всеволодович».


ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
РГУ “ Редакция Чебоксарской районной газеты “Тăван Ен”,

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции.
За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: А.А.СУСМЕТОВА.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 02.05.2007 г. в 16 час. 00 мин.
Тираж 1800. Заказ №
Индекс газеты - 54820.